Район администрацийĕн кунĕнчен

# Пĕрле тăрăшсан, палăртни пурнăçланĕ

**Район администрацийĕн кунĕсем малалла пыраççĕ. Чуманкасси ял тăрăхĕнче вăл мартăн 23-мĕшĕнче иртрĕ. Район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем ытти ведомствăсен специалисчĕсемпе пĕрле вырăнти предприятисемпе организацисен, учрежденисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнинчен, ăнăççăр çемьесенче пулнинчен пуçланчĕ вăл. Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин, РФ ПФ ĕçченĕсем яланхи пекех халăха хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнчĕç.**

Район администрацийĕн кунне хутшăннисем халăхпа Чуманкассинчи çĕнетнĕ Культура çуртĕнче тĕл пулчĕç. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева хăйĕн сăмахĕнче ял çыннисем килти хушма хуçалăха аталантарса пырассипе ăнăçлă ĕçленине палăртрĕ.

– 3-4-шар ĕне усракансем те пур. Кунне сĕт парса 800 тенкĕ тума пултараççĕ вĕсем, – терĕ Людмила Германовна. – Тавах Р.А. Иванов предпринимателе халăха туса илнĕ продукцие вырнаçтарма пулăшнăшăн.

Малтанхи çулсенче Чуманкассинчи шкул та, клуб та, Исетерккĕри клуб та юхăнса ларнă пулсан, шкул çивиттине те улăштарнă, Çĕнетнĕ Культура çурчĕ туса лартнă, Исетерккĕ клубĕн çивиттине те юсанă. Паян ку проблема ача садĕнче. Кăçал ун çивиттине юсама палăртаççĕ. Ял çыннисем вырăнти фельдшерпа акушер пункчĕн ĕçĕпе кăмăллă пулни те палăрчĕ Людмила Германовна сăмахĕнче. Шывпа тивĕçтерессипе, çулсем тăвасси, урамсене çутă кĕртесси çинче тĕплĕн чарăнчĕ. 7 ялтан 5-шĕнче шыв пăрăхĕсем пур. Ку енĕпе тухса тăракан кăлтăксене пĕтерессипе чылай ĕçленĕ, анчах та паян та тупăнсах тăраççĕ вĕсем. Çакă тĕл пулăва килнĕ çынсен сăмахĕнчен те палăрчĕ.

Çулсене пăхса тăма вырăнти бюджетран 314 пин тенкĕ уйăрнă пулнă. Отарккăра икĕ пралукра 150-шар метр хăйăр, вак чул сарса, çула хăпартнă. Пачкассине каякан çул çинче те çак ĕçсене туса иртернĕ. Отарккăри 4 км тăршшĕ çул тумалли проект та экспертизăран тухнă. Исетерккĕри çырма урлă каçакан çула 7 метр таран хăпартнă, анчах кризис килсе çапни ку ĕçе пĕтĕмпех вĕçлеме чăрмантарчĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хăйĕн сăмахĕнче çынсем ытларах эрех енне иленме пуçлани пăшăрхантарнине палăртрĕ. Ăнăççăр çемьесем ку тăрăхра çитеççĕ çав. Упăшкисем аякка ĕçлеме тухса кайсан, хĕрарăмĕсем те эрех черккинчен пăрăнасшăн мар иккен. Килти ахăрсамана та çак сăлтавпах пуçланать. Иртнĕ çул Чуманкасси ял тăрăхĕнче преступлени ытти ял тăрăхĕсенчен нумайрах пулнă. Районĕпе ку кăтарту чакса пырать пулсан, Чуманкассисен преступлени тăвасси иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 13 процент чухлĕ ӳснĕ.

Людмила Германовна тавралăха тирпейлĕ тытас ыйту çинче те нумай чарăнчĕ. Кашни ял тăрăхĕнчи çак проблема кунта та çук мар. Эрех кĕленчине ăçта ĕçнĕ, унта пăрахса хăварасси, килти ăпăр-тапăра çырмана, урама кăларса пăрахасси кунти çынсемшĕн те ют мар.

Çыннисем вара кунта ӳркенекен йышшисем мар. Активлă. Культура çуртне çĕнетни те, шкулти спортзал кăнтăрла ачасемпе, каçхине çамрăксемпе тулни те çакнах кăтартса парать. Ытти обществăлла ĕçсенче те айккинче пăрăнса тăмаççĕ ял çыннисем. Апла пулсан ялсене тирпей-илем кĕртессипе те ял халăхĕн пĕрлех тăрăшса ĕçлемелле. Çавăнпа ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çак сăмахĕсемпе килĕшмесĕр тăма ниепле те май çук.

– Тумаллисем татах та нумай. Пĕр-пĕринпе ăнланса пурăнасчĕ малалла та. Çавăн чухне çеç палăртнисене пурнăçлама пулать, – терĕ Людмила Германовна.

Тумаллисем, татса памалли ыйтусем вара çителĕклех, чăнах та. Вĕсем пирки залра ларакансем пĕрин хыççăн тепри тăрса каларĕç.

Хăйĕн сăмахĕнче район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов халăха таса шывпа тивĕçтермелли программа хальхи вăхăтра республикăн кăнтăр районĕсенче пурнăçа кĕнине, пирĕн пата черет 2015 çулта çеç çитессине асăнчĕ. Çавăнпа та мĕн пуррине упрамаллине, çăлсене тасатса тарăнлатмаллине палăртрĕ. Çулсем тăвас ыйтусем çинче чарăннă май Юрий Александрович Исетерккĕри пĕр тăван Алексеевсен урамне кăçал тусах пĕтерме палăртни, ача сачĕн çивиттине те майсем тупса юсамалли, кăçал районти 56 çĕнĕ урама электроçутă кĕртмелли, тайăлнă электричество юписене «Чăвашэнергон» юсамаллине палăртрĕ. Автобус кĕтсе тăмалли вырăнсенче павильонсем лартас ыйтупа та ĕçсем пыраççĕ. Газ оборудованийĕсене тĕрĕсленĕшĕн хаксем пысăкки пирки республикăри тариф комитетне тухассине палăртрĕ. Хăйĕн сăмахĕнче Юрий Александрович медпункта хупаççĕ тени тĕрĕс мар сас-хура пулнине, Чуманкассинчи медпунктра малтанхи пек светолечени тăвас ыйту та пурнăçланма пултаракан ыйту пулнине палăртрĕ. Шăл тухтăрĕсем те халăх ыйтнă пек вырăна тухса шăл юсама пултараççĕ – ку ыйту та пурнăçа кĕрĕ. Ю.А. Иванов тĕл пулура хускатнă ытти ыйтусем çине те тулли хуравсем пачĕ. Çавăн пекех районти шалти ĕçсен пайĕн ертӳçи Е.И. Плечов, районти тĕп больницăн поликлиника ертӳçи А.П. Чиновникова та залра ларакансен ыйтăвĕсем çине тивĕçлĕ хуравсем пачĕç.

Юрий Александрович вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсене Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă май юбилей медалĕсем парса чысларĕ. Чуманкасси шкул ачисен концерчĕ те кăмăла уçрĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май

# Юбилей медалĕсене тивĕçрĕç

2010 çулхи мартăн 16-мĕшĕнче савăнăçлă лару-тăрура вăрçăпа ĕç ветеранĕсен Каршлăхри интернат-çуртĕнче пурăнакансене 1941–1945 çулсенче Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалланă юбилей медалĕсене пачĕç.

Юбилей медалĕсене вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсене Муркаш районĕн пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов тата Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин представителĕ, социаллă учрежденисен аталанăвĕн секторĕн специалисчĕ Наталья Витальевна Марушева пачĕç. Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ самантпа ветерансене саламлама вара районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Нина Пантелеевна Петрова, центр директорĕ Ольга Васильевна Иванова тата РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ Елена Михайловна Александрова та килсе çитрĕç.

Вăрçă çулĕсене куç умне кăларма çăмăл мар. Пирĕн колхозниксен питех те йывăр условисенче вăй хума тивнĕ. Усă курма машинăсем, лашасем, чи пĕлтерĕшли вара – апат-çимĕç те çитмен. Хĕрарăмсен, ачасен тата ватă çынсен хул пуççийĕ çине тиеннĕ пĕтĕм йывăрлăх. Тылри совет хĕрарăмĕн Аслă Çĕнтерӳшĕн мĕн кăна чăтса ирттерме тивнине сăмахпа палăртаймăн.

Çапла, эсир Çĕнтерӳ тунă, халăха ирĕклĕх парнеленĕ. Эсир Çĕр çинче мир сыхласа хăвартăр. Анчах та унăн хакĕ йӳнĕ мар. Çĕнтерӳ кунне мĕн чухлĕ паттăр кĕтсе илеймерĕ!

Хисеплĕ ветерансем, тыл ĕçченĕсем, вăрçăра мăшăрĕсене çухатнă хĕрарăмсем, эпир сирĕн умра яланах парăмра. Пуç таятпăр çавăншăн сирĕн умăрта. Эсир пирĕн ачалăха сыхласа хăварнă, пире пурнăç парнеленĕ.

**В. КРЮЧКОВА,**
**культорг.**

# Пурăнас текен малаллах пăхать

**Район администрацийĕн черетлĕ кунĕсем мартăн 24 тата 25-мĕшĕсенче Ярославка тата Юнкă ял тăрăхĕсенче иртрĕç.**

**ЯРОСЛАВКА**

Ял тăрăхĕн территорийĕнче 9 ял вырнаçнă, пĕтĕмпе 1769 çын пурăнать. Экономикăпа социаллă сфера объекчĕсем сахал мар. Çавна май татса памалли ыйтусем те пур. Апла пулин те бюджетпа пăхса хунă 2 миллион та 278 пин тенкĕ вĕсене пурне те пурнăçлама çитсе каймасть. Çавна май вырăнти резервсене, майсене шырама тивет.

Çулсен ыйтăвне илес пулсан, иртнĕ çул Нискасси ялĕнчи Пришкольная урамри çула вак чул сарса хытарнă. Çуллахи вăхăтра пур ялсенче те çулсен пăсăлнă вырăнĕсене юсассипе ĕçсем пурнăçланă. Тăмкасси ялĕнче Звездная, Çĕмĕртлĕх Чемейре Б. Васильев урамĕсенче асфальт çул сарма проектпа смета докуменчĕсем хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ.

Тепĕр ыйту вăл – шыв ыйтăвĕ. Елшик, Çĕмĕртлĕх Чемей, Ярославка тата Чемей ялĕсенче шыв пăрăхĕсем кивелсе çитнĕ ĕнтĕ. Çавна май шывпа тивĕçтерессипе ыйтусем пур. Кунпа пĕрлех çăлсем чавассипе те ĕçсем пыраççĕ.

Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче пурăнакансен тата ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн депутачĕн М.Д. Попугаеван пуçарăвĕпе икĕ çăла юсаса йĕркене кĕртме май килнĕ. Ярославка ялĕнче вара Новая урамра пурăнакансен пуçарăвĕпе пĕвене юсассипе ĕçсем пурнăçланă.

Ялсенче тирпей-илем кĕртессипе сахал мар ĕçсем туса ирттереççĕ. Çуркунне тата кĕркунне ялсенче субботниксем, санитари кунĕсем ирттересси йăлана кĕнĕ. Уйрăмах Варпуç ялĕнче пурăнакансене ырăпа асăнмалла. Вĕсем çу кунĕсенче тирпей-илем кĕртессипе тăвата хутчен субботник ирттернĕ. Кунпа пĕрлех Варпуç, Çĕн Чемей ялĕсенче пурăнакансем 200 тĕпе яхăн йывăç лартса хăварнă. Ку ĕçе Нискасси шкулĕнче вĕренекенсем те активлă хутшăнаççĕ. Уйрăммăнах тата Нискасси ялĕнчи К.Л. Водянова, Ярославка ялĕнчи Ф.Ф. Яранские палăртса хăвармалла. Пĕтĕм ял çыннисемшĕн вĕсем тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Ял урамĕсене тасатассипе, çӳп-çап тăкса тултарнă вырăнсене тасатассипе чылай ĕç туса ирттернĕ. Кунпа пĕрлех выльăхсене пытарнă вырăнсене тирпейлессипе, вĕсене хӳме тытса чикĕлессипе те ĕçсем пурнăçланă. Вĕсем вара ял тăрăхĕн территорийĕнче 6. Тирпей-илем кĕртес, территорисене тасатас ĕçсене масарсем çинче те пурнăçланă.

Çынсене физкультурăпа спорта анлăрах явăçтарас тĕллевпе тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ. Нискасси шкулĕн стадионĕнче ял çамрăкĕсем валли те çул уçă. Çу кунĕсенче ялсенче те спорт мероприятийĕсене ирттерме майсем пур. Волейбол площадкисене йĕркеленĕ. 2009 çулта Эдуард Осипов пуçарăвĕпе пĕрремĕш хут Нискасси ялĕнче Çĕнтерӳ скверĕ умĕнче волейбол площадкине йĕркеленĕ тата ял тăрăхĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн çуллахи спартакиада ирттернĕ. Ял кунĕсене ирттересси те вăй илсе пырать.

Ял тăрăхĕн депутачĕсен пуçарулăхĕнчен те нумай килет. Хальхи вăхăтра депутатсем 9-ăн. Вĕсенчен Л.Н. Сорокинана, Р.В. Иштонована, В.М. Александрована, М.Д. Попугаевана ырăпа асăнса хăвармалла.

Ăнăççăр çемьесем пурри шухăшлаттармасăр тăма пултараймасть. Учета илнисем вĕсем 13 шутланаççĕ. Çемьесем енĕпе ĕçлекен комисси вĕсемпе çыхăннă ыйтусене ларусенче тăтăшах пăхса тухнă.

2009 çулта ял çыннисен кулленхи пурнăçĕпе çыхăннă ыйтусене сахал мар татса панă пулин те, 2010 çул валли те задачăсем пĕчĕк мар. Кусем вĕсем – ял урамĕсенче çăлсене юсасси, плотинăсемпе пĕвесене йĕркене кĕртесси, Ярославка ялĕнчи Центральная урамра ача-пăча площадкине йĕркелесси, ял хапхисене юсасси, часавай территорине тирпей-илем кĕртесси тата ыттисем те. Уйрăммăнах вара обществăлла çăлсене юсассипе ыйтусем сахал мар. Çавăн пекех Чемейри ял клубĕнче юсав ĕçĕсем туса ирттерме палăртнă. Елшикри клубра та, Ярославкăри Культура çуртĕнче те пурнăçламалли ĕçсем пур. Çапах та вĕсене ял çыннисем пĕрле пулсан пурнăçлама пултараççех.

**ЮНКĂ**

Ял тăрăхĕ тĕлĕшпе çавна палăртмалла. Чăннипех те юлашки çулсенче территорире усă курман çĕр лаптăкĕсем сахал мар пулнă. Иртнĕ çул вара усă курман çĕрсен чылай лаптăкне акса-лартса хăварма май килнĕ. Ку енĕпе ĕçлемелли татах пур-ха. Уйрăмах усă курман çĕр лаптăкĕсене арендăна парассипе тимлемелле. Анчах та нумайăшĕ хăйсен çĕр прависене документпа çирĕплетмен, кунпа пĕрлех çĕр илсе унпа ĕçлекен çынсем те нумаях мар.

Çапах та ырă тĕслĕхсем те пурах. Ку енĕпе чи малтанах ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн депутатне О.А. Аргандеева асăнмалла. Олег Алексеевич хăйĕн тата тăванĕсен çĕр пайĕсене арендăна илсе фермер хуçалăхĕ йĕркеленĕ, Пĕрремĕш Май выççăлккинче пурăнакан хăш-пĕр çынсем валли ĕç вырăнĕсем те туса панă.

Ял тăрăхĕн администрацийĕ вырăнти депутатсемпе, старостăсемпе çыхăнса ĕçлени те усăсăр мар. Ыйтусене пĕрле пухăнса татса пани пĕтĕмпех ял çыннисен кулленхи пурнăçне лайăхлатассипе, экономикăна тĕреклетессипе çыхăннă. Чи маттуррисен шутĕнче вара В.М. Илугина, О.А. Аргандеева, Л.А. Крылована, А.Г. Иштудована тата ыттисене асăнмалла. Çак депутатсем чăннипех те ял çыннисен ыйтăвĕсене татса парассишĕн тăрăшаççĕ.

Ял тăрăхĕн территорийĕнче пултаруллă та маттур çемьесем те çук мар. Районти, республикăри тĕрлĕ шайри конкурссене хутшăнакансем те пур. 2006 çулта Михайловсен çемйи «Çулталăк çемйи» конкурсра района 1-мĕш вырăна тухнă, 2007 çулта Апроськинсен çемйи республика конкурсĕнче «Чи ĕçе юратакан çемье» номинацире палăрнă, 2009 çулта Кудряшовсен çемйи республика шайĕнчен çĕнтерӳçĕ пулса таврăннă.

Юлашки вăхăтра ытларах çынсем çакна ăнланса илме тытăннă: хамăрăн пурнăçа хамăрăнах йĕркелесе пырас пулать. Çапла вара иртнĕ çул ялти çăлсене юсама та майсем тупнă.

Пушар хăрушă япала пулса тăрать. Çавна шута илсе иртнĕ çул ял администрацийĕ мотопомпа туяннă. Унпа пĕлтĕр ял хушшисенче ларакан шыв савăчĕсене тултарма усă курнă. Юнкă плотини çывăхĕнче пушар машинине пыма вырăн йĕркеленĕ.

Çулсене тытса тăрасси те япăх шайра мар. 2009 çулта Юнкă ялĕнче 530 метр, Юнкăпуç ялĕнче 420 метр, Кăпас ялĕнче 120 метр çулсене юсама майсем тупма пултарнă.

Ял тăрăхĕ умĕнче тăракан ыйтусене татса пама ветерансен, хĕрарăмсен, çамрăксен, профилактика канашĕсем, çемьесем тĕлĕшпе ĕçлекен комисси активлă хутшăнаççĕ. Ветерансен канашĕн ертӳçине Л.Л. Толстована, хĕрарăмсен канашĕн ертӳçине В.В. Егорована ырăпа палăртмалла.

2009 çулта туса ирттернĕ ĕçсен калăпăшĕ пĕчĕк мар пулин те, кăçал тумалли ĕçсем те сумлă. Пĕтĕмпех вĕсем ялти пурнăçа малалла аталантарассипе, çынсен пурнăçне лайăхрах тăвассипе çыхăннă. Чи малтанах Явăльня урамĕнче шыв пăрăхĕсене çĕнетсе çынсене шывпа тивĕçтерессине лайăхлатассипе, асфальт сарман урамсенчи çулсене тикĕслесе йĕркеллĕ тытса тăрассипе, усă курман çĕрсене пурне те пусă çаврăнăшне кĕртессипе, ялсем çывăхĕнчи çӳп-çап тăкса тултарнă вырăнсене тасатса тирпейлессипе, пушар сӳнтермелли автомашинăна хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕнче тытса тăрассине йĕркелессипе, Юнкăпуç ялĕнчи Солнечная урамри çĕнĕ çуртсене çут çанталăк газĕпе тивĕçтерессипе, Юнкăри тата Кăпасри палăксене юсаса-çĕнетсе илем кĕртессипе тимлемелле пулать.

**Ял администрацийĕсенчи çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе задачăсене татса пама, чăнах та, çăмăл мар. Апла пулин те пĕрлехи ыйтусене пĕрле татса пама пулатех. Ахальтен мар ĕнтĕ чăвашсем çапла калани пур: «Пĕччен суран – типсех пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать». Апла пулсан пĕрлехи ĕçрен никамăн та айккинче тăрса юлас марччĕ.**

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Эсир пĕлесшĕнччĕ

# Мĕншĕн пӳрне йĕрĕсене ӳкереççĕ?

***1998 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнчи 128-мĕш номерлĕ «Раççей Федерацийĕнче патшалăх дактилоскопи регистрацине тăрасси çинчен» федераллă саккунпа килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн гражданĕсем хăйсен ирĕкĕпех дактилоскопи (çынсем кам пулнине пĕлме пӳрне йĕрне ӳкерсе илни) регистрацине тăма пултараççĕ. Мĕншĕн кирлĕ вăл тата камсем усă курма пултараççĕ çав кăтартусемпе? Çак ыйтусем тавра калаçрăмăр та ĕнтĕ эпир Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикинчи федераци миграци службин пирĕн районти территори пункчĕн ертӳçипе З.М. СОРОКИНАПА.***

**– Зоя Михайловна, çул çитмен çамрăксене те тăратаççĕ-и çак регистрацие?**

– Раççей Федерацийĕн законодательствипе суд йышăнăвĕпе хăйĕн ĕçĕсемшĕн явап тытма пултарайман е пултарулăхне чикĕленĕ тесе йышăннисене, кĕçĕн çулхи ачасене тата çул çитмен çамрăксене асăннă регистрацие вĕсен ашшĕ-амăшĕсем е опекунсем, попечительсем çырса ыйтнипе тăратаççĕ. Çак категорие кĕрекенсене дактилоскопи регистрацине тăратнă чухне ашшĕ-амăшĕсен е опекунсен, попечительсен хăйсен те пулмалла. Хăйсен ирĕкĕпех патшалăх датилоскопи регистрацине тăратнă чух саккунлăхпа, гуманизмпа, конфидициаллăхпа, ирĕклĕ тата обязательнăй йĕркепе шайлаштарнипе килĕшӳллĕн, Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе çирĕплетнĕ çыннăн тата гражданинăн прависемпе ирĕкĕсене тытса пыраççĕ. Асăннă регистраци çыннăн сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратмалла мар, унăн чыспа тивĕçне вараламалла мар.

**– Мĕн тума кирлĕ дактилоскопи регистрацийĕ?**

– Хăйсен ирĕкĕпе патшалăх дактилоскопи регистрацине тăратса илнĕ даннăйсемпе çакăн чухне усă кураççĕ: Раççей Федерацийĕн хыпарсăр çухалнă гражданĕсене шыранă чух, паллă мар вилесем камсем пулнине пĕлме, чирленипе тата ӳсĕмне кура хăй камне калама пултарайман çын кам пулнине палăртма, Раççей Федерацийĕн гражданинĕн личноçне çирĕплетме, преступление асăрхаттарма, уçса пама тата тĕпчеме, çавăн пекех право йĕркине административлă майпа пăсассинчен асăрхаттарма тата тупса палăртма.

Дактилоскопи мелĕпе илнĕ даннăйсем шалти ĕçсен органĕсенче упранаççĕ.

**– Камсем усă курма пултараççĕ çак регистраци вăхăтĕнче илнĕ кăтартусемпе?**

– Вĕсемпе судсем, прокуратура, малтанхи сдедствие тăвакан, дознани органĕсем, çавăн пекех оперативлă майпа шырав ĕçĕсене пурнăçлакан, уголовнăй-исполнительнăй системăн, право йĕркине административлă майпа пăснисен ĕçĕсене пăхса тухакан, федераллă миграци службин органĕсем усă курма пултараççĕ.

**– Дактилоскопи регистрацийĕн кăтартăвĕсене ĕмĕрĕпех упраççĕ-и?**

– Çав кăтартусене вĕсене упракан шалти ĕçсен органĕсемех пĕтерме пултараççĕ. Çакна валли хăйсен ирĕкĕпех патшалăх дактилоскопи регистрацине тăнă граждансем хăйсем е Раççей Федерацийĕн законодательствипе килĕшӳллĕн суд йышăнăвĕпе хăйсен ĕçĕсемшĕн явап тытма пултарайман е пултарулăхне чикĕленĕ тесе йышăннисен, çак регистраци витĕр тухнă кĕçĕн çулхи ачасемпе çул çитмен çамрăксене ашшĕ-амăшĕсем, опекунсем, попечительсем çырса панă заявлени тăрăх пĕтереççĕ. Заявленине хăйсем пурăнакан вырăнти шалти ĕçсен органне памалла. Шалти ĕçсен органĕсем дактилоскопи регистраци даннăйĕсене пĕтерни çинчен заявлени çыракана 30 талăкран кая юлмасăр пĕлтермелле.

Çавăн пекех дактилоскопи регистрацийĕн даннăйĕсене ун витĕр тухнă гражданин 80 çул тултарсан е вăл вилнине çирĕплетсен пĕтереççĕ.

**Л. ТУКТИНА калаçнă.**